Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

68 (7493) № * Шăмат кун, 2007 çулхи августăн (çурла) 18-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕçре пултаруллисем**

## Ыттисемшĕн ырă тĕслĕх



***Василий Ильич Яковлев районти ăста утарçăсенчен пĕри. Çак ĕçе вăл Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăх утарĕнче пуçăннă, халĕ вара Михайлов фермер хуçалăхĕнче вăй хурать. Мĕн çамрăкран тĕлĕнтермĕш вĕлле хурчĕсем патне туртăннăскер, пĕлĕве Загорскри ял хуçалăх техникумĕнче туптать. Юратнă ĕçе чунĕпе парăннăран утарти кăтартусем ĕçлеме хавхалантарсах пыраççĕ. Районта кăна мар, республика шайĕнче те малтисен ретĕнче пулса Муркаш ятне çӳле çĕкленĕ. Кăçалхи çул та Василий Ильич пĕр çемье пуçне пĕр пăтран сахал мар сутлăх пыл илессишĕн тăрăшать. Пыл пысăк тупăш панине аван ăнланать утарçă, çавăнпа та утарти вĕллесен хисепĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать.***

**Республикăра**

## Халăх итлевĕ иртет

Саккунпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ республикăн 2008 çулхи тата планпа пăхнă 2009, 2010 çулсенчи тапхăрти бюджечĕн проекчĕ тăрăх халăх итлевĕ ирттерет. “Чăваш Республикинчи бюджетпа çыхăннă право хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен” саккунăн 47 статйипе килĕшӳллĕн тата ЧР Патшалăх Канашĕн Бюджет, налуксем, предпринимательлĕх тата харпăрлăх енĕпе ĕçлекен комитечĕ сĕннипе итлеве авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче ирттерме палăртнă.

Чăваш Енĕн виçĕ çуллăх бюджечĕн проектне “Республика” хаçатăн кăçалхи çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче тухнă 32-34-мĕш номерĕсенче пичетлесе кăларнă, Патшалăх Канашĕн сайтне (gs.cap.ru) вырнаçтарнă. Бюджет проекчĕпе çыхăннă сĕнӳсене кăçалхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕччен ЧР Патшалăх Канашне çак адреспа ярса пама ыйтаççĕ: 428004, Шупашкар хули, Республика лапамĕ, 1.

**Вырма – 2007**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ АВГУСТĂН 17-МĔШĔ ТĔЛНЕ КĔРХИ УЙ-ХИР ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене çулнă тата вырнă. 2. Улăм пухса тирпейленĕ (процентпа). 3. Вăтам тухăç (пĕр гектар пуçне, центнерпа). 4. Хирте вырма агрегачĕсем ĕçленĕ. 5. Кĕр аки валли çĕр хатĕрленĕ (гектарпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 41 | 75,1 | 10,0 | 3 | 0 |
| «Волга» | 32 | 84,6 | 15,3 | 2 | 20 |
| «Восток» | 04 | 100 | 14,7 | 3 | 57 |
| «Герой» | 99 | 62,8 | 15,0 | 4 | 83 |
| К. Иванов яч. хис. | 80 | 0 | 11,8 | 1 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 92 | 93 | 28,1 | 4 | 160 |
| ООО «ВТМ» | 0 | 0 | | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 35 | 69,5 | 17,3 | 2 | 135 |
| «Лидер» АФ | 2 | 0 | 14,0 | 0 | 250 |
| «Дружба» АФ | 100 | 100 | 21,8 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 78 | 83,5 | 18,9 | 3 | 195 |
| «Передовик» | 23 | 100 | 21,3 | 0 | 11 |
| «Свобода» | 51 | 60 | 19,1 | 3 | 170 |
| «Сеятель» | 19 | 100 | 16,9 | 3 | 200 |
| Суворов яч. хис. | 78 | 6,25 | 22,6 | 3 | 540 |
| «Рассвет» АФ | 34 | 73 | 22,6 | 5 | 160 |
| «Ударник» | 67 | 68,6 | 24,0 | 7 | 500 |
| Чапаев яч. хис. | 66 | 26,7 | 12,5 | 1 | 97 |
| «Чемеево» | 58 | 56,4 | 15,3 | 2 | 108 |
| Чкалов яч. хис. | 73 | 100 | 30,2 | 2 | 250 |
| ООО Мичурин яч. хис. АФ | 0 | 0 | | 0 | 0 |
| **Ял хуçалăх предприятийĕсемпе** | **53,9** | **66,7** | **19,2** | **48** | **2946** |

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

## Малашлăха пĕрле пăхмалла



**Анатолий Павлович Иванов пенси ыйтăвĕсемпе Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх йĕтемĕ çинче ĕçлекенсене тулли хуравсем пачĕ.**

Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче районта черетлĕ пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Унта хутшăнакансем виçĕ ушкăна пайланса Юнкă ял тăрăхĕнчи Матвеевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче тата “Вита” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра (ушкăнра ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В. К. Тихонов, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ертӳçи Н. С. Яковлев, район администрацийĕн вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен тата организаципе кадр, право ыйтăвĕсемпе тивĕçтерекен пай пуçлăхĕ Л. Ю. Тарасова), Муркаш ял тăрăхĕнчи Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхпа ача-пăча библиотекинче (ушкăнра РФ Пенси Фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн – патшалăх учрежденийĕн управляющийĕн çумĕ А. П. Иванов, РФ Пенси Фончĕн Муркаш управленийĕн ертӳçи Е. М. Александрова, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Г. Данилов, район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. В. Петров, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. И. Никитин), Оринин ял тăрăхĕнчи “Оринино” тата “Восток” пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче (ушкăнра РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕн пуçлăхĕ Л. П. Морозов, район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ А. И. Павлов) пулчĕç. Кашни ĕç коллективĕнчех информаци кунне ирттерекенсем республика аталанăвĕпе паллаштарчĕç, ял çыннисене хумхантаракан ыйтусемпе тивĕçлĕ канашсемпе сĕнӳсем пачĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Информаци кунне ирттерекенсем пурнăç аталанăвĕпе паллаштарни кашни çыншăнах вырăнлă пулчĕ.**

**Райадминистрацире**

## Ĕçри пултарулăхшăн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен районти канашĕ, Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ, электроçыхăнăвăн районти узелĕн ĕç коллективĕ тата куç курманнисен Пĕтĕм Раççейри обществин вырăнти организацийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 322-мĕш № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Владимир Михайлович АЛЕКСАНДРОВА**, куç курманнисен Пĕтĕм Раççейри обществин вырăнти организацийĕн председателĕн çумне – вырăнти организацин обществăлла пурнăçне хастар хутшăннăшăн;

– **Петр Иванович ЖИВОЙКИНА**, педагогика ĕçĕн ветеранне – вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул тăрăшнăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн;

– **Галина Никитична КИРИЛЛОВАНА**, куç курманнисен Пĕтĕм Раççейри обществин вырăнти организацийĕн бюро членне – вырăнти организацин обществăлла пурнăçне хастар хутшăннăшăн;

– **Ольга Сергеевна СЕМЕНОВАНА**, районти электроçыхăну узелĕн Мăн Сĕнтĕрти участокĕн пуçлăхне – çыхăну ĕçĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн;

– **Римма Александровна ПОПОВАНА**, Москакасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учительне – çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн.

**Тӳрлетни**

Хаçатăн иртнĕ номерĕнче тырă вырса çапассипе районта малта пыракан комбайнерсен кăтартăвĕсене пичетленĕччĕ. Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетекен комисси айăпĕпе унта йăнăш кайнă вырăнсем пур. «Вырма паттăрĕсем» материалта тӳрлетсе çапла вуламалла:

**«Нива – СК-5» комбайнсен класĕнче мала тухнă тесе йышăнас:**

1 вырăнта – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Варсонофий Леонидович Леонидов комбайнер экипажĕ, 200 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 300 тенкĕ парса хавхалантарас;

3 вырăнта – «Передовик» хуçалăхри Николай Александрович Горбунов комбайнер экипажĕ, 71 тонна тĕш тырă çапса тĕшĕленĕ, свидетельствăпа 100 тенкĕ парса хавхалантарас.

Вырма паттăрĕсене малашне те ĕçре ăнăçусем сунатпăр!

## Йӳнĕ хакпа çырăнăр

### Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен хаçат-журнал çырăнмалли хак 27 процент ӳсет

**Вăхăт малаллах васкать. Акă “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнмалли тапхăр çитрĕ.**

**Вулакансене аса илтеретпĕр, район хаçатне августăн 31-мĕшĕччен унчченхи хакпа çырăнтаратпăр. Унченхи хак тени вăл иртнĕ çырăнтару кампанийĕнчи хака пĕлтерет. Ултă уйăхлăха çырăннăшăн 147 тенкĕ те 42 пус тӳлемелле. Августăн 31-мĕшĕччен.**

**Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен мĕн пур хаçат-журнала çырăнтармалли хак 27 процент чухлĕ ӳсет. Çав шута, паллах, район хаçачĕ те кĕрет. Çакăн çинчен пĕлтерчĕç пире почта ĕçченĕсем.**

**Апла пулсан, хаклă вулакансем, “Çĕнтерӳ ялавне” çитес çул валли паян-ыранах çырăнса илме тăрăшăр. Хаçат хакланиччен 16 кун çеç юлчĕ.**

**Çитес çул та пĕрле пулар! Райхаçат редакцийĕ.**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*

Пирĕн хисеплĕ те юратнă çыннăмăр **Владимир Германович НИКИТИН** çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă тăвать. Çак кун эпир ăна чи ăшă та кăмăллă сăмахсем калăпăр. Вăл пирĕншĕн пуринчен хакли, юратни, сăпайли те маттурри пулнине пĕлтерес килет, чун-чĕререн саламласа çак сăмахсем шăрçаланчĕç:



Пурнăç çулĕ çăмăл мар,
Утса тухма кирлĕ ăс-тăн та вăй-хал.
Пĕр-пĕрне юратса пурăнар,
Ыр сунса пурăнни – телей те халал.
Çемйӳ пысăк та туслă сан,
Ачасем сăпайлă та ырă пулсан –
Савăнтарĕç пире ялан,
Турри панă телейне упрасан.
Ыр сунатпăр сана, тав тăватпăр,
Çирĕп сывлăх та телей халаллатпăр,
Яту пултăр ялан хисепре,
Çĕр çинче чи ырри – эс пĕрре!!!

**Мăшăрĕ, ачисем, çывăх тăванĕсем.**



– Сан çуралнă кун, çуралнă кун.

Акă ĕнтĕ çитрĕ кĕтнĕ кун, – тетпĕр эпир паян 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламланă май Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕньял Хуракассинче пурăнакан хаклă йăмăка, юратнă аннепе хунямана, çепĕç кăмăллă асаннепе кукамая, ырă тăвансăмăра **Валентина Димитриевна ВАСИЛЬЕВАНА**. Ĕç ĕмĕрне “Свобода” хуçалăхра ирттерсе ял хушшинче ырă ят хăвартăн, пире ĕçе тата пурнăçа юратма вĕрентрĕн. Сана пирĕнпе пĕрле татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕ, кинĕсемпе кĕрĕвĕ, 8 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăр – Мăн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Ретина Сергеевна БОГДАНОВА** ыран 70 çул тултарать. Юратнă аннене юбилейпа чĕререн саламлатпăр, тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, икĕ ĕмĕр сунатпăр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕ ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Унăн ывăлĕ Анатолий Валерьевич Богданов та 45 çул тултарчĕ. Ăна та çуралнă кунĕ ячĕпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр.

**Салампа: ывăлĕсем, кинĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**



Сентимĕр ялĕнче пурăнакан **Федосия Федотовна СУРИКОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Сана юбилей ячĕпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Ачусемпе мăнукусем, çывăх тăвансем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: 2 ывăлĕ, 2 кинĕ, хĕрĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, тăванĕсем, кӳршисем.**



Хисеплĕрен те хисеплĕ, хаклăран та хаклă çывăх çыннăмăра – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Серафима Ильинична АРХИПОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, тулли телей, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Салампа: хĕрĕпе кĕрĕвĕ, ывăлĕ, Ивановсемпе Васильевсен çемйисем, çывăх тăванĕсем.**